# Вун пӗр ҫул каяллахи тӗлпулу

**_Чӑваш литературипе ҫывӑхрах паллашма кӑмӑл тӑвакансем валли пирӗн музейре тӗрлӗ мероприяти иртет. Уявсене пултарулӑх ҫыннисене йыхравлатпӑр. Килен-каяна, уйрӑмах ҫамрӑк ӑрӑва, ҫыравҫӑсемпе курса калаҫтарасси ялан тӗп вырӑн йышӑнать. Хамӑрӑн пӗрремӗш ертӳҫӗ Иван Ивник сӑвӑҫ пуҫарнӑ ырӑ йӑлана ҫирӗп пӑхӑнатпӑр._**

2001 ҫулхи ака уйӑхӗн 24-мӗшӗнче кунта Шупашкарти 18-мӗш шкулти вӗренекенсем Филипп Андреева, «Чӗмпӗр ҫути» повеҫ авторне, тимлӗн итленӗччӗ. Аллӑ ача тата икӗ учитель, Людмила Ивановӑпа Елена Тимофеева, хутшӑннӑччӗ аслӑ вӗрентекенӗмӗре Иван Яковлева халалланӑ тӗлпулӑва. Сӑмах «Чӗмпӗр ҫути» повеҫ ҫинчен пынӑччӗ. Произведенире автор Иван Яковлев, вӑл уҫнӑ Чӗмпӗр чӑваш шкулӗ пирӗн халӑхшӑн вышкайсӑр пысӑк пӗлтерӗшлине витӗмлӗн ӑнлантарма мехел ҫитерне.

Хӑй те учительте ӗҫленӗ Филипп Андреевич ун чухне ачасемпе часах пӗр чӗлхе тупрӗ. «Повеҫри тӗп герой – Йӑвашук Качуров. Вӑл пирӗн тӑрӑхра, Ҫӑкаллӑ Явӑшра, чӑн-чӑнах пурӑннӑ чӑваш ачи. Тӗттӗм тавралӑхран тухса ҫутӑ пуласлӑх енне туртӑнас ӗмӗтпе ҫунатланнӑ, Чӗмпӗр чӑваш шкулне лекнӗ», – каласа кӑтартма тытӑнсанах кӑсӑклантарчӗ вӑл вӗсене. Япӑх сӑнарсем ҫинчен шарламарӗ. Пархатарлисене – Никифор Охотникова, Иван Яковлева, Элиссана – аса илчӗ. Ачасене ырӑ тӗслӗхсемпе хавхалантарчӗ. «Чӑваш пулса ҫуралнӑшӑн савӑнатӑп. Эсир те ман пек пулӑр, тӑван халӑха, чӗлхене чунран юратӑр», – ҫав хушӑрах ытти халӑхпа та туслӑ пурӑнмаллине асӑрхаттарса сӑмахне вӗҫлерӗ Филипп Андреевич.

Хайхи тӗлпулура педагогика университечӗн доценчӗ Алевтина Николаева та тухса калаҫнӑччӗ. Архив материалӗсемпе усӑ курни автора повеҫре Иван Яковлев сӑнарне туллин кӑтартма май панине палӑртнӑччӗ. Тата Алевтина Николаевна ҫакна асӑрханӑ иккен: Филипп Андреевич ӑнаҫлӑ мел шыраса тупнӑ. Хайлавра Иван Яковлевич ҫул ҫинче тӑтӑш сӑнарланнӑ. Ӗмӗр тӑршшӗпех халӑх ырлӑхӗшӗн, ӑна ҫутта кӑларас ӗмӗтпе пурӑннӑ вӑл. Ҫул – ялан ҫӗнӗлӗх шыранине, ӗмӗте пурнӑҫа кӗртес тесе вӗҫӗм малалла ӑнтӑлнине пӗлтерет.



● *Филипп Андреев (малти ретре – сылтӑмран пӗрремӗшӗ). 2001 ҫул.*

Галина Смирновӑпа Валерий Семенов юрӑҫсене пурте хавас пулнӑччӗ. Вӗсем шӑрантарнӑ чӑваш юррисем кӑмӑла ҫӗкленӗччӗ. Историпе тӑван ен культурине вӗрентекен Людмила Иванова интереслӗ тӗлпулушӑн чӗререн тав тунӑччӗ.

**Галина ЕЛИВАНОВА,**
**К.В.Иванов ячӗллӗ Литература музейӗн ӗҫчене**

Музей архивӗнчи сӑн ӳкерчӗк